25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
21
ЫТЛАРИКУН
188(6425) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ЕРЕМЕНКĂНА
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

Калинин фрончĕн çарĕсем тăвата кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ тăрăхне татса кĕнĕ, унăн нумай вăхăтлăха тĕреклетнĕ РИБШЕВО, ВЕРДИНО, ЛОМОНОСОВО, КУЛАГИНО, ПАНКРАТОВО ятлă пункчĕсене аркатса тăкнă та нимĕçсен СМОЛЕНСК çулĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ чи кирлĕ пунктне—ДУХОВЩИНА хулине штурмласа тытса илнĕ.

Хĕвеланăç фрончĕн çарĕсем, хаяр çапăçусенче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, нимĕçсен СМОЛЕНСК хули патнелле пымалли вырăнсенчи оборонин тĕреклетнĕ чи кирлĕ пунктне—ЯРЦЕВО хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ.

Çапла вара пирĕн çарсем нимĕçсен Смоленск хапхи текен нумай вăхăтлăха, вăйлăн çирĕплетнĕ оборона тăрăхне çĕмĕрсе тăкнă.

ДУХОВЩИНĂПА ЯРЦЕВО хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче БЕРЗАРИН генерал-лейтенантăн, ГЛУЗДОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОЛУБЕВ генерал-лейтенантăн çарĕсем, ДРЕМОВ полковникăн танкисчĕсемпе авиаци генерал-лейтенанчĕн ГРОМОВĂН тата авиаци генерал-майорĕн ПАПИВИНĂН летчикĕсем палăрнă.

Уйрăмах тата çаксем палăрнă:

ОЗИМИН генерал-майорăн 91-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, КВАШНИН генерал-майорăн 17-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизийĕ, ЦУКАРЕВ полковникăн 184-мĕш стрелковăй дивизийĕ, МАНЧЖУРИН полковникăн 46-мĕш механизированнăй бригади, МИХАЙЛОВ подполковникăн 47-мĕш механизированнăй бригади, артиллери генерал-майорĕн САМБОРСКИН 21-мĕш артиллери дивизийĕ, САВЛЕВИЧ полковникăн 4-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери бригади, МАТУЗАС подполковникăн 4-мĕш штурмовой инженерно-сапернăй бригади, КУЧЕРЯВЕНКО полковникăн 306-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ДОБРОВОЛЬСКИЙ генерал-майорăн 134-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ТУРЬЕВ полковникăн 234-мĕш стрелковăй дивизийĕ, КУДРЯВЦЕВ генерал-майорăн 178-мĕш стрелковăй дивизийĕ, АНДРУЩЕНКО генерал-майорăн 185-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ПИСАРЕВ генерал-майорăн Хĕрлĕ ялавлă 82-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ШУЛЬГА полковникăн 274-мĕш стрелковăй дивизийĕ, КОСОЛАПОВ полковникăн 359-мĕш стрелковăй дивизийĕ, СМОЛОВИК подполковникăн 233-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ, ДЫМЧЕНКО майорăн 123-мĕш Гвардейски бомбардировочнăй авиаци полкĕ, ПОЛУБОЧКО подполковникăн 2-мĕш Гвардейски мотоциклетнăй полкĕ, ВЫБОРОВ подполковникăн 529-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, МОСЕНЗОН майорăн 72-мĕш инженернăй батальонĕ, СЕМЕНОВ майорăн 90-мĕш уйрăм понтон-кĕпер батальонĕ.

Тунă çĕнтерĕве палăртас майпа нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонин тăрăхне татнă чухне тата ДУХОВЩИНĂПА ЯРЦЕВО хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чаçсене çакăн пек ятсем парас:

„ДУХОВЩИНСКИ"
91-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие,
17-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие,
184-мĕш стрелковăй дивизие,
46-мĕш механизированнăй бригадăна,
47-мĕш механизированнăй бригадăна,
21-мĕш артиллери дивизине,
4-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери бригадине,
4-мĕш штурмовой инженерно-сапернăй бригадăна;

„ЯРЦЕВСКИ"
82-мĕш Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизие,
274-мĕш стрелковăй дивизие,
359-мĕш стрелковăй дивизие,
529-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкне,
90-мĕш уйрăм понтон-кĕпер батальонне,
72-мĕш инженернăй батальона,
2-мĕш Гвардейски мотоциклетнăй полка,
233-мĕш штурмовой авиаци дивизине,
123-мĕш Гвардейски бомбардировочнăй авиаци полкне;

„РИБШЕВСКИ"
306-мĕш стрелковăй дивизие;

„ВЕРДИНСКИ"
134-мĕш стрелковăй дивизие;

„ЛОМОНОСОВСКИ"
234-мĕш стрелковăй дивизие;

„КУЛАГИНСКИ"
178-мĕш стрелковăй дивизие;

„ПАНКРАТОВСКИ"
185-мĕш стрелковăй дивизие.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

91-мĕш Гвардейски Духовщински стрелковăй дивизи,
17-мĕш Гвардейски Духовщински стрелковăй дивизи,
184-мĕш Духовщински стреловăй дивизи,
46-мĕш Духовщински механизированнăй бригада,
47-мĕш Духовщински механизированнăй бригада,
21-мĕш Духовщински артиллери дивизийĕ,
4-мĕш Духовщински истребительнăй противотанковăй артиллери бригади,
4-мĕш Духовщински штурмовой инженерно-сапернăй бригада,
82-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Ярцевски стрелковăй дивизи,
274-мĕш Ярцевски стрелковăй дивизи,
359-мĕш Ярцевски стрелковăй дивизи,
529-мĕш Ярцевски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
90-мĕш Ярцевски уйрăм понтон-кĕпер батальонĕ,
72-мĕш Ярцевски инженернăй батальон,
2-мĕш Гвардейски Ярцевски мотоциклетнăй полк,
233-мĕш Ярцевски штурмовой авиаци дивизийĕ,
123-мĕш Гвардейски Ярцевски бомбардировочнăй авиаци полкĕ,
306-мĕш Рибшевски стрелковăй дивизи,
134-мĕш Вердински стрелковăй дивизи,
234-мĕш Ломоносовски стрелковăй дивизи,
178-мĕш Кулагински стрелковăй дивизи
185-мĕш Панкратовски стрелковăй дивизи.

Паян, сентябрĕн 19-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ нимĕçсен СМОЛЕНСК çулĕ çинчи оборонине татнă тата ДУХОВЩИНĂПА ЯРЦЕВО хулисене тытса илнĕ хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ДУХОВЩИНĂПА ЯРЦЕВО хулисемшĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Пирĕн çарсем Украинăра хăвăрт наступлени туса пырса 1943 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕпе 18-мĕшĕнче ПРИЛУКИ, РОМНЫ, ПИРЯТИН, ЛУБНЫ, РОМОДАН, МИРГОРОД, КРАСНОГРАД, ПАВЛОГРАД хулисене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç.

Çак хуласемшĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă:

167-мĕш Сумски стрелковăй дивизи, 163-мĕш стрелковăй дивизи, 337-мĕш стрелковăй дивизи, 237-мĕш стрелковăй дивизи, 309-мĕш стрелковăй дивизи, 373-мĕш стрелковăй дивизи, 93-мĕш стрелковăй дивизи, 218-мĕш стрелковăй дивизи, 72-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи, 81-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи, 58-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи, 1-мĕш механизированнăй корпус, 2-мĕш танковăй корпус, 161-мĕш Гвардейски тупăллă артиллери полкĕ, 115-мĕш Гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, 292-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ, 60-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи, 172-мĕш стрелковăй дивизи, 42-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи.

Тунă çитĕнӳсене яланлăха палăртса хăварас тесе, асăннă соединенисемпе чаçсене çакăн пек ятсем парас:

„ПРИЛУКСКИ"
42-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие;

„РОМНЕНСКИ"
163-мĕш стрелковăй дивизие;

„ЛУБНЕНСКИ"
337-мĕш стрелковăй дивизие;

„ПИРЯТИНСКИ"
309-мĕш стрелковăй дивизие,
237-мĕш стрелковăй дивизие;

„МИРГОРОДСКИ"
373-мĕш стрелковăй дивизие,
93-мĕш стрелковăй дивизие;

„РОМОДАНСКИ"
218-мĕш стрелковăй дивизие;

„КРАСНОГРАДСКИ"
72-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие,
81-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие,
58-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие,
1-мĕш механизированнăй корпуса,
161-мĕш Гвардейски тупăллă артиллери полкне,
115-мĕш Гвардейски истребительнăй противотанковăй артиллери полкне,
292-мĕш штурмовой авиаци дивизине,

„ПАВЛОГРАДСКИ"
60-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизие,
172-мĕш стрелковăй дивизие.

Малашне çав соединенисемпе чаçсене çапла чĕнмелле тăвас:

42-мĕш Гвардейски Прилукски стрелковăй дивизи,
163-мĕш Ромненски стрелковăй дивизи,
337-мĕш Лубненски стрелковăй дивизи,
309-мĕш Пирятински стрелковăй дивизи,
237-мĕш Пирятински стрелковăй дивизи,
373-мĕш Миргородски стрелковăй дивизи,
93-мĕш Миргородски стрелковăй дивизи,
218-мĕш Ромодански стрелковăй дивизи,
72-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизи,
81-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизи,
58-мĕш Гвардейски Красноградски стрелковăй дивизи,
1-мĕш Красноградски механизированнăй корпус,
161-мĕш Гвардейски Красноградски тупăллă артиллери полкĕ,
115-мĕш Гвардейски Красноградски истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,
292-мĕш Красноградски штурмовой авиаци дивизийĕ,
60-мĕш Гвардейски Павлоградски стрелковăй дивизи,
172-мĕш Павлоградски стрелковăй дивизи.

167-мĕш Сумски стрелковăй дивизие, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскере, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

2-мĕш танковăй корпусран 8-мĕш гвардейски танковăй корпус тăвас. Корпус командирĕ танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕ Алексей Федорович ПОПОВ. Çĕнĕ ят панă корпуса ГВАРДИ ЯЛАВĔ парас.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

КРЮКОВ генерал-майор ертсе пыракан 2-мĕш Гвардейски кавалери корпусĕ 1943 çулхи сентябрĕн 11-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче ДЕСНА шывĕ урлă каçнă чухнехи çапăçусенче вăрçă ĕçне питĕ лайăх вĕренсе çитнине, çирĕп пулнине тата маневрсем тума пĕлнине кăтартнă.

Çав корпусăн чаçĕсем тăшман тылне кĕрсе кайнă та Десна шывĕ урлă каçнă, ун хĕрринчи плацдарма тытса илнĕ, ăна вара, нимĕçсен пысăк чаçĕсен танксемпе авиаци пулăшнипе тунă темиçе контратакине сирсе ярса, хамăр пехота чаçĕсем пырса çитиччен 4 кун хушши тытса тăнă.

Десна шывĕ урлă каçнă чух паттăррăн кĕрешнĕшĕн 2-мĕш Гвардейски кавалери корпусне ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Асăннă корпусăн 20-мĕш Хĕрлĕ Ялавлă тата Ленин орденлĕ кавалери дивизине 17-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ Ялавлă тата Ленин орденлĕ кавалери дивизийĕ тесе ят парас. Дивизи командирĕ — Павел Трофимович КУРСАКОВ майор. Çĕнĕ ят панă дивизие ГВАРДИ ЯЛАВĔ парас.

ДЕСНА шывĕ урлă ăнăçлăн каçнăшăн корпус командирне тата уйрăмах палăрнă соединенисемпе чаçсен командирĕсене СУВОРОВ орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

КОЛПАКЧИ генерал-лейтенантăн çарĕсем 1943 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕнче БРЯНСК хулинчен кăнтăртарахра анлă фронтра ДЕСНА шывĕ урлă каçнă та ТРУБЧЕВСК хулине йышăнса илнĕ, халĕ вĕсем хĕвеланăçнелле ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ.

ДЕСНА шывĕ урлă каçнă чухне хăюллăн та татăклăн кĕрешнĕшĕн арми командующине, çавăн пекех тата чапа тухнă соединенисемпе чаçсен командирĕсене СУВОРОВ орденĕсемпе наградăлама тăратас.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 18-мĕшĕнчи оперативлă сводка

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче **КИЕВ** енче пирĕн çарсем çаплах анăçалла малалла тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 230 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра—**МИРГОРОД** хулине, **РОМОДАН** хулине чугун çул узелне, **КОБЫЖЧА** чугун çул узелне, Черниговски облаçĕнчи **КУЛИКОВКА, БОБРОВИЦА, МАЛАЯ ДЕВИЦА, ИВАНИЦА, СРЕБНОЕ, ВАРВА** ятлă район центрĕсене тата халăх пурăнакан пысăк пунктсене: **ВИБЛИ** (Чернигов хулинчен 10 километр хĕвелтухăçнелле), **БАКЛАНОВА МУРАВЕЙКА, ВУДА, СЛОБОДА, СМОЛЯНКА, ОЛИШЕВКА, ХРЕЩАТОЕ, ПАТЮТА, ДАНЕВКА, СТЕПАНОВКА, САЛЬНОЕ, ГАЛИЦА, ПОЛОВА, ОЛЬШАНА, РЯШКИ, КАЛЮЖЕНЦЫ, ПОДОЛ, ДЕГТЯРЫ, СВЕТЛИЧНОЕ, ПРИХОДЬКИ, МАКИЕВКА, СУХОНОСОВКА, МЕЛИХИ, ВОЛЧЕК, ПОЛОВКА, МАЛЫЕ СОРОЧИНЦЫ, ВЕЛИКИЕ СОРОЧИНЦЫ** ятлă пунктсене тытса илнĕ.

ЗАПОРОЖЬЕ тата **МЕЛИТОПОЛЬ** хулисем енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, анăçалла малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 110 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра—**ПОЛОГИ** хулине чугун çул узелне, **НОГАЙСК** хулине, **ВЕРХНИЙ ТОКМАК** чугун çул узелне, Запорожье облаçĕнчи **НОВОНИКОЛАЕВКА, ЧЕРНИГОВКА** ятлă район центрĕсене, **ЗАЛИВНОЕ, ВОСКРЕСЕНКА, ЛЮБИЦКОЕ, ЕГОРОВКА, НОВО-ГРИГОРЬЕВКА, НОВО-ПОЛТАВКА, ТОКМАЧАНСК, НЕЛЬГОВКА, ЮРЬЕВКА, ВЯЧЕСЛАВКА, ПАРТИЗАНЫ, БОРИСОВКА, ОБИТОЧНОЕ** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **КИРИЛЛОВКА, НЕЛЬГОВКА, ЕЛИЗАВЕТОВКА, ТРОЯНЫ** ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, **ПАВЛОГРАД** хулине чугун çул узелне, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 150 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра—Харьков облаçĕнчи **САХНОВЩИНА** ятлă район центрне, Днепропетровск облаçĕнчи **ЮРЬЕВКА** ятлă район центрне тата **ДАР НАДЕЖДЫ, ОГИЕВКА, ЧЕРНОГЛАЗОВКА, НОВО-ИВАНОВСКИЙ, ВЕРБОВАТОВО, ПАВЛОГРАДСКИЕ ХУТОРА, БОГУСЛАВ, АЛЕКСАНДРОВКА, ПРЕОБРАЖЕНКА** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ПОЛТАВА тата **КРАСНОГРАД** хулисем енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 4 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Харьков облаçĕнчи **КОЛОМАК** район центрне тытса илнĕ.

Пирĕн **НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ** хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем, 15 километр таран малалла куçса, Десна шывĕ урла каçса, хĕвеланăçнерехре тата халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Чернигов облаçĕнчи **ПОНОРНИЦА, СОСНИЦА** ятлă район центрĕсене тата **БЛИСТАВА, АВДЕЕВКА, ХЛОПЯНИКИ, РУДНЯ, ЧЕРНОТИЧИ, КУДРОВКА, ВОЛЫНКА, ОЛЬШАНОЕ** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

БРЯНСК хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем, 30 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 250 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Орел облаçĕнчи **ЖУКОВКА** ятлă район центрне станцине, **РЕЧИЦА, ГОСАМА, ЧИМОДУРОВО, НОВО-АРХАНГЕЛЬСК, ПАНИКОВИЦА** (Брянск хулинчен 22 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехре), **КОЗЛОВКА, БАРАЧЕВКА, ЛОПУШЬ** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

СМОЛЕНСК тата **РОСЛАВЛЬ** хулисем енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 5—6 километр малалла куçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ.

Пирĕн **КУБАНЬРЕ** тата **НОВОРОССИЙСК** хулинчен хĕвеланăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем тăшман хирĕç тăмалли вăйлă çирĕплетнĕ çак пунктсене тытса илнĕ: **КИЕВСКОЕ, МОЛДАВАНСКОЕ, НЕБЕРДЖАЕВСКАЯ, БАТАРЕЙНЫЙ, ГЛАДКОВСКАЯ, НОВОКРЫМСКИЙ, НИЖНЕ-БАКАНСКАЯ, ГАЙДУК, ВЛАДИМИРОВКА, ГЛЕБОВКА, ЮЖНАЯ ОЗЕРЕЙКА, АБРАУ-ДЮРСО.**

Сентябрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 16 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ.

Сентябрĕн 19-мĕшĕнчи оперативлă сводка

СМОЛЕНСК енче Калинин фронтĕнчи çарсем 4 кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн нимĕçсен нумай вăхăтлăха тунă вăйлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхне татса кĕнĕ те тăшманăн **СМОЛЕНСК** хули патне пымалли çулсем çинчи тĕреклĕ паха пунктне—**ДУХОВЩИНА** хулине тытса илнĕ.

Хĕвеланăç фронтĕнчи çарсем, хаяр çапăçусенче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, нимĕç оборонин Смоленск хули патне пымалли çулсем çинчи тĕреклĕ паха пунктне—**ЯРЦЕВО** хулипе чугун çул станцине—штурмласа тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем анăçалла малалла тапăнса пынă, 15 километртан 20 километр таран малалла куçса, **ПРИЛУКИ, ПИРЯТИН, ЛУБНЫ, ХОРОЛ** хулисене тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 180 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра халăх пурăнакан пысăк пунктсене: **АНИСОВО** (Чернигов хулинчен 6 километр кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре), **ЯНОВКА, КРАСНОЕ, ТОПЧЕЕВКА, КРАСИЛОВКА, ЦЕРКОВИЩЕ, ЧЕМЕР, ЛЕМЕШИ, ЛИХОЛЕТКИ, КОНЕВЩИНА, КОВТУНОВКА, ДАВЫДОВКА, ТАРАСОВКА, ГУБСКОЕ, НОВАКИ, СОЛОНИЦА, ПОКРОВСКАЯ БОГАЧКА, ШТАМПЕЛЕВКА, ЗВЕЗДИЛОВКА, ЛИНОВИЦЫ, ГРАБАРОВКА, ЛАЗОРСКИЕ, СОЛОНИЦКАЯ, ТЕРНОВЩИНА, БЕЕВ, КИБИНЦЫ, МАЛАШЕНКОВ, ГОГОЛЕВО, ШИШАКИ** ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ЗАПОРОЖЬЕ тата **МЕЛИТОПОЛЬ** хулисем енсенче пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 170 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра **ОРЕХОВ** хулине чугун çул станцине, **ПАВЛОВКА, БОГДАНОВКА, ПОДГОРНЫЙ, НОВО-ИВАНОВКА, СЛАВНЫЙ, ЖЕРЕБЕЦ, НОВО-ДАНИЛОВКА, ВЕРБОВОЕ, СКЕЛИВАТА, КАЙКУЛАК, ОРЕХОВКА, ВОСРЕСЕНА, СТЕПАНОВКА, ИНЗОВКА, ОРЛОВКА, ПРЕСЛАВ** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата **МАЛАЯ ТОКМАЧКА, НОВО-КАРЛОВКА, ЧЕЛЮСКИН, СТУЛЬНЕВО** ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ДНЕПРОПЕТРОВСК хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, уйрăм участоксенче 10 километртан пуçласа 18 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 80 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра **ЛУКАШЕВКА, БОГАТАЯ ЧЕРНЕЩИНА, КУРНОСОВКА, ЛЕВЕНЦОВКА, МИХАЙЛОВКА, ПОПАСНОЕ, ХАНДАЛЕЕВКА, ВЯЗОВОЕ, ВЕРБОВКА, ПИСАРЕВКА** ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ПОЛТАВА хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, **КРАСНОГРАД** хулине чугун çул узелне тытса илнĕ. Вăл шутра **ОТРАДА, ИСКРОВКА, ОЧЕРЕТОВО, БЕЛУХОВКА, ВАРВАРОВКА, ТИШИНОВКА, МАРЬЯНОВКА, ЛЕБЯЖЬЕ** ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Пирĕн **НОВГОРОД-СЕВЕРСКИЙ** хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тапăнакан çарсем, 20 километртан пуçласа 30 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Чернигов облаçĕнчи **ХОЛМЫ, МЕНА, БЕРЕЗНА** ятлă район центрĕсене тата **МАШЕВО, ПОПОВКА, ОРЛОВКА, РЕЙМЕНТАРОВКА, БЕНДЕРОВКА, ДОМАШЛИН, КИСЕЛЕВКА, СИНЯВКА, ГОРОДИЩЕ, ВОЛОСКОВЦЫ, СТОЛЬНОЕ, ЛОСНИСТОЕ, БЕГАЧ** ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

БРЯНСК хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем анăçалла малалла тапăнса пынă, 15 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, **ТРУБЧЕВСК** хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 300 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра—**ЛЕТОШНИКИ, БЕЛОГОЛАВЛЬ, СТОЛБЫ, ШАНКИНО** (Брянск хулинчен 5 километр хĕвеланăçнерехре), **СТАРШЕВИЧИ, САВЛУКОВО, КРАСНОЕ, СОСНОВОЕ БОЛОТО, СДЕСЛОВКА, ЩУКЛИНО, КАТЛЯКОВА, МОСТОЧНАЯ, СЕМЯЧКИ, КВЕТУНИ, СЕЛЕЦ** ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

РОСЛАВЛЬ хули енче пирĕн çарсем, Десна шывĕ урла анăçалла каçса, хыççăн 5 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Смоленск облаçĕнчи **ЕКИМОВИЧИ** ятлă район центрне, Орел облаçĕнчи **ДУБРОВКА** район центрне тата халăх пурăнакан **БОГДАНОВО, БОЛЬШИЕ ГУСАРКИ, АНТОНОВКА, СУВОРОВО, ПЕТРОВСКОЕ, КЛЕЙЧЕТОВО, ПЕКЛИНА** ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

КУБАНЬРЕ пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, **ВОЛЧЬИ ВОРОТА** ятлă ту каççине, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 20 пункта ытла, вăл шутра **ВЕРХНЕ-БАКАНСКИЙ** ятлă район центрне, тытса илнĕ.

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 33 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлăй артиллери тăшманăн 36 самолетне персе ӳкернĕ.

Смоленск енче Калинин фронтĕнчи çарсем 4 кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхне татнă. Нимĕçсем икĕ çул хушши çирĕплетнĕ оборона тăрăхĕ нумай вăхăтлăха тунă тĕреклĕ пунктсемпе 6 рубежран, темĕн чухлĕ дзотсенчен, броньăллă колпаксенчен тата ытти сооруженисенчен тăнă, ун умне тăршшĕпех минăсем лартса тухнă. Тăшман хăйĕн пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене контратакăсене кĕрте-кĕрте ярса хаяррăн хирĕç тăнă, анчах та пирĕн çарсем Духовщина хулине штурмласа йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен темиçе дивизине аркатса тăкнă. Совет çарĕсем нимĕçсенне 72 танк, 204 тупă, 100 миномет ытла, 376 пулемет, боеприпассен 34 складне пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 26 танк, 200 тупă, 300 миномет ытла, 570 пулемет, автоматсемпе винтовкăсем нумай, боеприпассен 22 складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 600 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

Хĕвеланăç фронтĕнчи çарсем, хаяр çапăçусенче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, нимĕçсен Смоленск хули патне пымалли çулсем çинчи чи кирлĕ оборона пунктне — Ярцево хулипе чугун çул станцине —тытса илнĕ.

* * *

Киев енче пирĕн çарсем çаплах анăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, Чернигов хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Десна шывĕ патне пырса тухнă. Тепĕр соединени боецĕсем Прилуки хулишĕн хаяррăн çапăçнă. Каç пулса килнĕ тĕле пирĕн çарсем Прилуки хулипе чугун çул узелне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Хулашăн пынă çапăçусенче 1.000 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

Советсен танковăй чаçĕсем юлашки икĕ кун хушшинче тăшман çарĕсене, Удай шывĕ çинчи майлă рубежсенче чаранса тăма хăтланакан-скерсене, пыра-пыра çапса йывăр çухатусем кӳнĕ. Пирĕн танкистсем уçса панă хушăка пирĕн пехотинецсем кĕрсе кайнă та, нимĕçсен уйрăлса кайнă ушкăнĕсене пĕтере-пĕтере тăкса, Удай шывĕ урлă каçса кайнă. Пирятин хулине тытса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем Лубны хулине тытса илнĕ.

* * *

Полтава енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем, 15 километр малалла куçса, Красноград хулине çавăрса илнĕ. Каçхи тĕттĕмпе усă курса, пирĕн боецсем Берестовая шывĕ урлă каçнă та штурмласа Красноград хулине тытса илнĕ. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе те, техника енчен те йывăр çухатусем кӳнĕ. Çар грузĕ тиенĕ темиçе поезда, выльăх валли хатĕрленĕ тĕштырă складне, горючи складне тата хĕçпăшалпа боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Новгород-Северский хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшманăн минометсемпе тата артиллерипе вăйлăлатнă чаçĕсем, наступлени туса пыракан совет çарĕсене чарма хăтланса, хаяррăн хирĕç тăнă. Пĕр соединени боецĕсем, тăшмана сывлăш çавăрма та вăхăт памасăр, нимĕçсене хыççăнах хăваласа пыраççĕ, вĕсене аркатаççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, кун каçа 700 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 4 танкпа бронемашина, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă тата 9 хир туппи пĕтерсе тăкнă. Юсавлă 3 танк, 4 радиостанци, 200 лаша, темиçе склад тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Совет боецĕсем Мена хулине сасартăк вăркăнса кĕнĕ те ăна пĕтĕмĕшпех йышăнса илнĕ. 350 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Бугриновка тата Стахоршина ятлă халăх пурăнакан пунктсенче пирĕн чаçсем нимĕçсем Германи каторгине хăвалса каякан 4.000 мирлĕ совет çыннине ирĕке кăларнă.

* * *

Брянск хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени çарĕсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă та Трубчевск хулине штурмласа йышăнса илнĕ. Хулашăн пынă çапăçура нимĕçсен пехотине пĕр полка çити пĕтерсе тăкнă, 9 танк, тупăсем тата минометсемпе пулеметсем нумай пĕтерсе тăкнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, 17 тупă, 24 миномет, снарядсемпе патрон склачĕсем, боеприпассем тиенĕ поезда, 20 тонна телефон провочĕ тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Чылай гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Кубаньре пирĕн çарсем малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла, вăл шутра Верхне-Баканский ятлă район центрне, тытса илнĕ. Кун каçичченхи çапăçусенче нимĕçсен 1.200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 28 тупă, 1150 автоматпа винтовка, 27.000 снарядпа мина тытса илнĕ. 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Киев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Чапаев ячĕпе тăракан отрячĕ сентябрĕн 11-мĕшĕнче юханшыв урлă каçасем хуракан нимĕç саперĕсене тапăннă. Партизансем 56 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, каçăсене сирпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизансемех нимĕçсене хресченсенчен тырă туртса илсе Германие яма паман. Совет патриочĕсем хресченсенчен туртса илнĕ тырра илсе кайма хăтланнă 80 нимĕç салтакĕпе полицейскине ытла пĕтерсе тăкнă.

Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшас туйăмпа ĕçлеççĕ

КУСЛАВККА, сентябрĕн 17-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Куисерен çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвакан Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă воинĕсене тивĕçлĕ пулар, фронта татах та ытларах пулăшар!—Çакăн пек туйăмпа ĕçлеççĕ комбинатри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем.

Комбинат коллективĕ пирĕн совет хулисемпе ялĕсене ирĕке кăларакан войскăсене август уйăхĕнчи производство планне ирттерсе тултарнипе саламларĕ. Çапла вăл август уйăхĕнче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура виççĕмĕш вырăна тухма пултарчĕ. Нефедов юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри работниксем уйрăмах пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Çамрăксен Давыдов юлташ ертсе пыракан фронтовой бригади уйăхри плана 240 процент, Давыдов юлташ хăй 387 процент тултарнă. Стахановецсен Викторкин, Матвеев, Забродин юлташсем виçшер норма ытла тултарнă. Ахальтен мар ĕнтĕ цех коллективĕ заводри куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава илнĕ.

Халĕ Новороссийск, Новгород-Северский, Нежин тата ытти нумай хуласемпе ялсене ирĕке кăларакан войскăсене комбинат коллективĕ продукци туса кăлармалли плана кунран кун ирттерсе тултарнипе саламлать. Комбинатри вуншар рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служащисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ

ЭЛĔК, сентябрĕн 18-мĕшĕ. **(Хамăр корр., телефонпа).** Районри колхозниксемпе колхозницăсем, паттăр Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Халĕ кашни колхозрах кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Çак кунсенче «Шуçăм», «16 партсъезд», «IX съезд ВЛКСМ», «Хĕрлĕ ялав» колхозсем авăн çапса пĕтерчĕç.

Нидерландсен посолĕ барон К. Ван Брюгель Дуглас господин хăйĕн верительнăй грамотисене пани

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче кăнтăрла 1 сехетре СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Нидерландсен Совет Союзĕнчи посолне барон К. Ван Брюгель Дуглас господина йышăннă. Барон К. Ван Брюгель Дуглас господин М. И. Калинин юлташа хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Барон К. Ван Брюгель Дуглас господинпа пĕрле Нидерландсен посольствин атташи Л. Крайтбос господин пулнă, ăна посол М. И. Калинин юлташпа паллаштарнă.

Верительнăй грамотăсене панă чухне Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ, Наркоминделăн 1-мĕш отделĕн заведующийĕ А. И. Лаврентьев юлташ, Наркоминделăн протокол отделĕн заведующин заместителĕ—Г. И. Фомин юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсем илнĕ хыççăн М. И. Калинин юлташ барон К. Ван Брюгель Дуглас господинпа калаçнă.

Всевобуч икĕ çул тултарнине паллă туни

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Шупашкарта всевобуч икĕ çул тултарнине паллă туса ирттерчĕç. Ирхине 9 сехет тĕлне всевобуч пунктне пур боецсем те тата командирсемпе политработниксем пухăнчĕç. Унта ВКП(б) тата ВЛКСМ хула комитечĕсен представителĕсем пулчĕç.

Малтанах Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ всевобуч боецĕсене, командирĕсене, политика тĕлĕшпе ĕçлекен тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисемпе наградăласси çинчен кăларнă Указа вуласа пачĕç. Кун хыççăн всевобуч подразделенийĕсен смотрĕ пуçланчĕ.

Строевой смотрта Волков командирăн подразделенийĕнчи пĕрремĕш взвод мала тухрĕ. Иккĕмĕш вырăнта—Шкенев командирăн подразделенийĕнчи пĕрремĕш взвод.

Кун хыççăн граната ывăтассипе ăмăрту пулса иртрĕ. Ăмăртура Шкенев командирĕн подразделенийĕнчи команда малти вырăна тухрĕ. Хĕрарăмсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Волков подразделенийĕ йышăнчĕ. Уйрăммăн илсен ăрçынсем хушшинче Захаренко юлташ, хĕрсенчен Клюенкова юлташсем лайăх результатсем кăтартрĕç.

* * *

Каçхине чăвашсен государство академи театрĕнче всевобуч боецĕсемпе командирĕсен тата политработникĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура всевобуч икĕ çул тултарни çинчен майор Фелин юлташ доклад туса пачĕ. Унтан лейтенант Михайлов, боецсем Латышева, Тютиков тата аманнă хыççăн отпуска килнĕ боец Кутяшов юлташсем тухса каларĕç. Пуху Сталин юлташ патне çыру яма йышăнчĕ.

Пуху хупăннă хыççăн Шупашкарти чăлха çыхакан фабрикăри хор хăйĕн художествăллă пултарулăхне кăтартса пачĕ.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен тинĕс-çар вăйĕсем виçĕ кун маларах Неаполь заливĕнче Искиа утравне йышăнса илнĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕ, çурçĕрелле куçса пырса, американецсен 5-мĕш армийĕпе пĕрлешнĕ. Çавна пула союзниксен Салерно фронтĕнчи çарĕсен лару-тăравĕ лайăхланнă-çемĕн лайăхланса пырать.

Сулахай флангра нимĕçсем каялла чакаççĕ.

Союзниксен çарĕсем Альтавилла тата Баттипалья хулисене тытса илнĕ. Союзниксен флочĕ Салерно районне çаплах çарсем тата çар материалĕсемпе машинăсем нумай кӳрсе тăрать.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çарĕсене, çулйĕрĕсене, транспортне тата склачĕсене хаяррăн пыра-пыра тапăннă. Римран кăнтăртарахра аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă чухне тăшманăн çĕр çинче пулнă самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Халĕ те, малтанхи пекех тăшманăн пĕр самолечĕ те хирĕç тăрса çапăçма хăтланман.

Хĕвелтухăç Италире Пескара ятлă чугун çул узелне юрăхсăра кăларнă. Бомбăсем юханшыв çинчи кĕперсене тӳрремĕнех пырса тивнĕ. Бомбăсем пăрахнипе пула тĕрлĕ объектсене, вăл шутра нефтехранилищĕсене, вут хыпса илнĕ.

Ĕнер союзниксен сывлăш-çар вăйĕсем тăшманăн аэродромĕсене вăйлăн тапăннă. Çĕр çинче пулнă нумай самолетсене пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

ИТАЛИ СУДНИСЕМ АЛЕКСАНДРИЙĂНА ÇИТНĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Итали карапĕсем, Мальтăран тухнăскерсем, Александрия портне çитнĕ. Вĕсене Британи карапĕсем хӳтĕлесе пынă. Александрия портне çитнĕ Итали карапĕсен ушкăнĕнче «Италия» тата «Витторио» ятлă линкорсем тата эсминецсем пур.

Гитлеровецсен Римри террорĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Римри яланхи пурнăçа пĕтĕмпех пĕтерсе лартнă. Нимĕçсем Итали салтакĕсене Тивольри питĕ пысăк концентрациллĕ лагере хăваласа пуçтарнă.

Нимĕç çарĕсем сентябрĕн 17-мĕшĕнче продовольстви магазинĕсене çĕмĕрекен Римри выçă халăх çине пенĕ. Хула халăхĕ çемье пуçне паракан пĕрер кĕрепенкке кишĕрпе çеç пурăнать. Нимĕçсем хресченсенчен хатĕрлесе хунă пĕтĕм çимĕçсене тытса илеççĕ. Ялсенчи халăх хăйĕн апат-çимĕçĕсене нимĕçсен отрячĕсенчен пытарать.

АВСТРАЛИРИ ПРОФСОЮЗСЕН ДЕЯТЕЛĔСЕМ ШВЕРНИК ЮЛТАШ ПАТНЕ ЯНĂ ТЕЛЕГРАММА

СИДНЕЙ, сентябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Австралири 400 пин членлă тĕрлĕ профсоюзсен 30 председателĕпе секретарĕ Шверник юлташ патне çакăн пек телеграмма янă:

«Эпир çапла шутлатпăр: иккĕмĕш фронта уçмасăр малалла та чаранса тăни Европăри вăрçа тăсса пырса, Лăпкă океан çинчи вăрçа та темĕн чухлĕ вăхăтлăхах вăраха ярать. Çавăнпа та эпир Британи профсоюзĕсене Хĕвеланăç Европăра иккĕмĕш фронта халех уçассине пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрсах тăрăшма чĕнетпĕр. Эпир çакна куллнса паллă тăватпăр: Нэглер совет профсоюзĕсем çинчен тухса калани вăл пĕр сăлтавсăр калани тата кулăшла халлап çапни пулса тăрать, ун пек хăтлани профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхне хавшатни пулса тăрать»,—тенĕ.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕ Берлинри нумай объектсем çине пырса тапăннă. Истребительнăй авиаци самолечĕсем Бретаньри (Франци) чугун çул объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çавăн чухне нумай паровозсем сиенленнĕ. Англин пур самолечĕсем те хăйсен базисене таврăннă.

Пĕлтерӳ

Сентябрь уйăхĕн 22-мĕш числинче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) агитаторсем валли ушкăнлă консультаци пулать. Консультаци теми: «Сталин юлташăн **«Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки тăрăх тумалли калаçусене епле ирттермелле».**

Консультацие ВКП(б) горкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ **Ислюков** юлташ ирттерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШПРОМСТРАХКАССĂНА ялан ĕçлеме çак пек работниксем кирлĕ: доверенлăй врач, оргинспектор, ача учрежденийĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер тата шут ĕçне вĕренес текен учениксем.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, дом № 21 (здание Кожупряжи); телефон 6—79 (два звонка).

2—1.

ЧĂВАШСЕН ТАРАСАСЕМ ЮСАКАН ЗАВОДНЕ

çакăн пек работниксем васкавлăн кирлĕ: бухгалтер, бухгалтер помощникĕ, кладовщик-приемщик тата плановик-экономист.

Пĕччен пурăнакансене хваттер параççĕ.

Вырсарникунсемсĕр пуçне кунсеренех, ирхине 9 сехетрен пуçласа 16 сехетчен, çак адреспа ыйтса пĕлме пулать: гор. Чебоксары, ул. Ворошилова, 46.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67. редакци секретарĕн—4—26. парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1829 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.